# АСРАН КАЙМИ СĂНАР

**Игнатьева Анисия Павловна,**
*Г.Н. Волков академикăн вĕренекенĕ,*
*12-мĕш шкул, Шупашкар хули*

Виçĕ çул, кашни кун, сехечĕ сехечĕпе пĕрле…, пĕр шухăшпа…, пĕр ĕмĕтпе…, пĕр шанăçпа… Эрнере пĕр кун – вырсарни кун – сиктертĕм, – шăп çав кун хамăн Вĕрентекене, чунăма чи çывăх çынна – Геннадий Никандрович Волкова – çухатрăм. Мĕншĕн пурнăçра çавăн пек пулать? Пĕр кун е пĕр сехет, е пĕр минут ĕлкĕрейместпĕр? Кам мана ăнлантарса пама пултараять?!

Кам шутланă?! Яланах йăл кулса шÿтлесе калаçнăран вăл мана ĕмĕр-ĕмĕр пурăнассăн туйăнатчĕ. Тепĕр ирхине тунти кун раштав уйăхĕн 27-мĕшĕнче хваттерне васкаса пырса кĕтĕм (вăл мана алăк уççине шанса панă) – ман Вĕрентекенĕн чĕри тапма чарăннă. Хваттерте иккĕн кăна: эпĕ, унăн вĕренекенĕ, тата сывлама чарăннă ман чи çывăх çын – Вĕрентекен. Хăрушă, чăтмалла мар хăрушă. Аптăраса ўкнипе çурта çутса чунне ирĕке яма та ăс çитереймерĕм (çуртасем килĕнче çителĕклехчĕ, вăл çулăм асамлăхне, вăйне ĕненетчĕ: çурта çутмасăр апат умне ларман). Çак усал хыпара унăн çывăх çыннисене пĕлтерме мана мĕнлерех йывăр пулнине кам та пулин ăнланайĕ-ши? Тăххăрмĕш кунне анчах кăшт тăна кĕме пуçларăм, хама хам алла илме пултартăм.

Унтанпа сисĕнмесĕрех чылай вăхăт иртрĕ. Вăл çĕр çинче çуккине ăс-тăнпа питĕ лайăх ăнланатăп пулин те, чĕрем çакна нихăçан та йышăнмĕ, хам темле тăрăшсан та, чĕрене вăйпа йышăнтараймăп. Эпĕ ăна яланах хампа пĕрле, тепĕр чухне хамра та туятăп. Элистаран, Мускавран шăнкăравланă телефон номерĕсене кĕсье телефонĕнчен хуратма халĕ те вăй та, хал та çитерейместĕп. Ак халь-халь шăнкăравлас пек туйăнса тăрать. Те тепĕр чух питĕ кĕтнĕрен, троллейбусра сас та илтĕнсе кайнă пек туйăнса илет – анчах савăнни кăлăхах, – вăл ман ĕмĕт кăна иккенне телефона алла илсен ăнланатăп. Килти телефон янраса кайсан – пуринчен малтан чупса пыратăп, анчах та ун чĕрĕ сассине эп те, эс те, хисеплĕ вулаканăм, шел пулин те, урăх илтеймĕпĕр. Вилнĕ çынна каялла тавăрма çук. Унта лексен халиччен никам та каялла таврăнни пулман. Эпир тепĕр чухне пĕр-пĕрне сăмахпа варалама та, киревсĕр ĕçсем тума та именсе тăмастпăр, хамăр çĕр çинче хăнара пулнине манса каятпăр. Кама та пулин ĕмĕрлĕхех çухатсан кăна çакăн çинчен аса илетпĕр. Геннадий Никандрович мана яланхи пекех вăхăтлăха Калмăка кайнăн туйăнса тăрать.

Геннадий Никандрович халĕ те ман куç умĕнче. Тен, вилнĕ хыççăн унăн ўтне пĕрремĕш тĕкĕннĕрен, унăн таса чунĕн пĕр пĕчĕк пайăрки ман чĕрене тивме ĕлкĕрнĕн туйăнса тăрать. Паянхи кун манпа ăнлантарса пама май çук пулăмсем пулса иртеççĕ: тĕлĕкре вăл мана темĕнле паллăсем ярать, эпĕ ăна туйса тăратăп, ун сассине илтетĕп. Манăн Вĕрентекен пурнăçра ман сыхлавçă, управçă пек пулса юлчĕ. Кирек мĕнле çĕнĕ ĕçе тытăнас умĕн те ун таса та çутă сăнарĕ куç умне тухса тăрать, вăл панă пил-пехил сăмахĕсем аса килеççĕ. Вĕрентекен парнелесе хăварма ĕлкĕрнĕ ручкăна алла илсен вара сăмахĕсем хăйсемпе хăйсемех çырăнса пынăн туйăнать, ручкăна вылятса пыма анчах ĕлкĕр!

Пурӑннӑ чух вӑл ман чуна хӑйӗн шухӑшлавӗпе пуянлатрӗ. Ҫӗр ҫинче чи хӑватлӑ мел те, эмел те – Юрату – иккенне ӗнентерчӗ. Уйрӑмах ҫак мелпе учительсем хӑйсен ӗҫӗнче кашни самантрах усӑ курмаллине палӑртатчӗ.

Геннадий Никандрович ӑс парса пынисем ман шухӑшлава тарӑннӑн кӗрсе вырнаҫрӗҫ. «Хамӑн (килти) тата хамӑн мар (шкулти) ачасем анчах пулаҫҫӗ. Хамӑн мар ачасем чӑн-чӑн вӗрентекеншӗн пачах та ют ачасем мар. Шкул ачисене учителӗн хӑйӗн ачисем пек юратма вӗренсе ҫитмелле. Юрату хальлӗхе тӗлӗрсе тутлӑн ҫывӑрать пулсан, ӑна вӑратмалла. Педагогикӑра пӗрремӗш вырӑнта пӗлӳ мар, Юрату пулмалла. Юратакан ачасем патне учитель хӑех пӗлӳсӗр пыма ниепле те хӑяймӗ, юратнӑ ачасемпе эсӗ хӑвах хаяр та, усал та пулаймӑн. Ҫак юратушӑнах эсӗ хӑвӑн пӗлӗвне ҫулран-ҫул ӗҫрен ыйтнипе мар, чун хушнипе ӳстерсе пырӑн. Ачасен юратӑвӗшӗнех эсӗ хӑвна, ху тӑрӑшса пухнӑ пӗлӗвне юратма пуҫлӑн. Юрату хӑй учителе ҫирӗп ӑс-тӑнлӑ, тарӑн пӗлӳллӗ, анлӑ тавра курӑмлӑ, ырӑ кӑмӑллӑ та ӑш пиллӗ пулма хистет. Ҫут ҫанталӑк вӑрттӑнлӑхӗ, асамлӑхӗ йӑлтах Юратура», – ҫак сӑмахсене эпӗ хамӑн Вӗрентекенрен кунран-кунах илтсе тӑнӑ.

Сахал вӑхӑт хушши пӗлетӗп пулин те, эпӗ Вӗрентекенӗмре ҫут ҫанталӑкӑн асамлӑ вӑйӗ пуррине асӑрхарӑм. Ҫакна ҫирӗплетсе калама манӑн тӗслӗхсем те сахал мар (вӗсем ҫинчен тепӗр чух калаҫӑпӑр). Ҫут ҫанталӑк ҫӗр ҫинче пурӑнакан пӗр ҫынна та парнесӗр хӑвармасть: юмахри пек хӑшне ылтӑн, хӑшне тикӗт лекӗ. Ҫакӑ вӑл пӗтӗмӗшпех хамӑртан анчах килет. Пурнӑҫ вӑрттӑнлӑхне Геннадий Никандрович халӑх хушшинче, халӑх сӑмахлӑхӗнче шырама вӗрентсе пыратчӗ. Хӑй вара вӑл сакӑр вун виҫӗ ҫул хушши тивӗҫлӗ канӑва каймасӑр кашни кун ирӗн-каҫӑн ырми-канми халӑхшӑн ӗҫленӗрен хӗвелпе уйӑх хӑватне тивӗҫнӗ.

Геннадий Никандрович ҫынсене хавхалантарма, ҫунат хушма ӑстаччӗ. Вӑл нумайӑшне хӑй вӗсене юратни ҫинчен, ҫак ҫын талантлӑ, генийллӗ пулни ҫинчен калатчӗ. «Ман юратӑвӑм, манӑн чапӑм, мухтавӑм, мӑнаҫлӑхӑм, ман ӗненӗвӗм, шанӑҫӑм, шанчӑкӑм, ӗмӗтӗм», – тетчӗ вӑл хӑй калаҫакан ҫынра хӗвелӗн ҫут пайӑркине кӑш та пулин курсан. Ҫак сӑмахсене пӗрисем тӳреммӗн ӑнланса ӗненсе лартма та, ӗненмессе те пултарнӑ. Ҫак сӑмахсен усси те пур, сиенӗ те ҫук мар. Эпӗ вара Вӗрентекенӗн сӑмахӗсене хам евӗр ҫапларах ӑнланаттӑм. Енчен те вӑл сана самахпа ҫын умӗнче, халӑх умӗнче ҫӗклерӗ пулсан, – санӑн вӑл каланӑ пек пулма тӑрӑшмалла, талпӑнмалла. Вӗрентекен сӑнарланӑ ҫын вӑл хальлехе чат эсех мар, вӑл ҫын валли малашне ҫавӑн пек пулмалли ырӑ тӗслӗх, пит тӑрӑшса ӗҫлесен ҫак ҫыннӑн шанӑҫ пуррине систерет.

Вӑл сана юрататӑп тесе сӑмах хушрӗ пулсан – сан малтан ҫак юратӑва халӑха усӑллӑ ӗҫсемпе тивӗҫлӗ пулма тӑрӑшмалла, талпӑнмалла. Сан ҫинчен чаплӑ сӑмахсем каларӗ пулсан, вӑл эсӗ ҫавӑн пеккине пӗлтермест, – сан ҫавӑн пек пулма тӑрӑшас тесе ырми-канми тар юхтарса ӗҫлемеллине пӗлтерет. Вӑл – эсӗ мар. Вӑл – сӑнар. Ҫӗр ҫинчи кашни ҫыннӑн ҫавӑн пек пулма тӑрӑшмалли ҫутӑ ҫын, тӗслӗх. Ҫавӑн пек таса, ҫутӑ ҫынсем ытларах пулсан кӑна тӗнче сыхланса юлма пултарать.

Тепӗр чухне чунне уҫса калаҫнӑ чухне ассӑн сывласа ҫапларах та калатчӗ: «Ҫакна пурте ӑнланаймарӗҫ е ӑнланма пултараймарӗҫ, е ӑнланма тӑрӑшас

темерĕç. Эп каланă сăмахсене тӳремĕн хăйсем çине илсе ытлашшипех мăнаçланса кайрĕç».

Геннадий Никандрович хăйне евĕрлĕ çын. Унра асамлăх нумай, вăл тарăн шухăшлавлă çын. Ăна тепĕр чух ăнланма та çăмăлах мар. Акă вăл хăй каласа кăтартнă пурнăçри пĕр саманта анчах илсе парам. Вăл пулас ача амăшне: «Эпĕ сирĕн умăрта чĕркуçленсе тăма хатĕр!» – тенĕ. Хĕрарăм питрен хĕрелсе кайнă, çавăнтах куçран çухалнă. Геннадий Никандрович шучĕпе тин çуралнă ача – çĕнĕ пурнăç, шанăç. Вăл çĕнĕ пурнăç умĕнче чĕркуçленсе тăма хатĕррине каласшăн пулнă. Генисене ăнланма тепĕр чух пирĕн ăс та çитмест. Çамрăк хĕрарăм çак сăмахсене тӳремĕн ăнланнă.

Пирĕнтен тухнă йăла мар. Вилнĕ çынна канлĕ çывăрма ыйтаççĕ. Канлĕ çыврăр, хаклăран та хаклă Геннадий Никандрович! Çак аса илӳ эпĕ сан тăпру çине хунă эсир юратнă шап-шур хризантема çыххи вырăнне пултăр… Çĕр çинче сирĕн вĕренекенĕрсем, сирĕнпе пĕр шухăшлă çынсем пур пулсан, – эсир канлĕ çывăрма пултаратăр, ĕненĕр: çакăн пек çынсем ытларах. Ун пек пулмасан тĕнче тахçанах саланса кайнă пулĕччĕ, апла пулсан, çутă малашлăха ĕненсе, Геннадий Никандровичран тĕслĕх илсе, пĕр-пĕрне ыр сăмахсемпе хавхалантарса, хамăрăн кулленхи ĕçпе киленсе килĕшӳпе юратура пурăнар! Килĕшӳпе юратура пурăнакансем пиллехлĕ. Çапла пултăр! Çапла пултăр! Çапла пултăр!